Муркашри чăх-чĕп фабрикинче

Аталану çулĕпе çирĕппĕн утать

Вырăнсене тухса çӳренĕ май, тĕрлĕ хуçалăхсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма тӳр килет. Пĕр пек условисенчех вĕсен производство аталанăвĕ расна пулни вара самаях шухăша ярать: ăçта çитсе тăрăпăр капла? Сăлтавĕ те çук мар-çке кунта. Акă пĕрисем хуçалăх тĕрекленсе аталанса пытăр тесе сахал мар вăй хураççĕ, вĕсен пур çĕрте те ĕç кал-кал. Шел пулин те, теприсем пирки çапла калаймăн. Хуçалăхсем юхăнса пыни кăмăла хуçать. Выльăх-чĕрлĕх фермисем çултан-çул арканаççĕ: витисем тайăлаççĕ, выльăх-чĕрлĕх йышĕ те пӳрнепе шутламалăх çеç. Маларах тухăçлă тыр-пулпа савăнтарнă уйсене çитсе курар-ха тата. Халĕ çав пусăсенче хыт хура, çум курăк хуçаланаççĕ. Тупăш илеймренен ĕçлекенсене вăхăтра тӳлемеççĕ. Ялти вăй питти çынсен çав сăлтава пулах ĕç шыраса тăван кĕтесрен аякка тухса çӳреме тивет.

Çапла, пурнăçри пăтăрмахсем хăш-пĕр хуçалăхсене ывăрлăха кĕртсе ӳкерчĕç теме пăхаççĕ пĕрисем. Анчах та çакăн пек авăртан тухакансем те пур-çке. Паллах, коллективра ертӳçĕрен пуçласа кашни рядовой ĕçчен пĕр ĕмĕттĕллевпе малашлăхшăн вăй хунипе.

Хальхи вăхăтра, пасар условийĕсенче, ĕç эффективлăхне ӳстермесĕр хуçалăх производствине аталантарма çук. Çакна асра тытса вăй хураççĕ те ĕнтĕ "Моргаушская" чăх-чĕр фабрики" унитарлă предприятире.

Коллективăн ĕçĕ-хĕлĕ сулмаклă та ăнса пынине чăх-чĕп фабрикин территорине кĕрсенех туятăн. Кунта илсе çитерекен сарнă çулăн икĕ енĕпе, кантур умĕнче, территоринчи клумбăсенче çуркуннерен тытăнса тавралăх "шурă кавирпе" витĕнниченех тĕрлĕрен илемлĕ чечексем куça илĕртеççĕ, кăмăла çĕклеççĕ.

Палăртмалла, тирпейлĕх хуçаланать кунта. Производство цехĕсем юсавлă. Тул енчен те, шалтан та известьпе шуратнă вĕсене. Улма-çурла йывăççисем сахал мар, тутлă çимĕçпе савăнтараççĕ вĕсем кунта вăй хуракансенĕ.

Пушă вăхăта усăллă ирттерме кунтах волейболпа футбол площадкисем уçнă.

Çынсен сывлăхне тĕрĕслеме фельдшер пункчĕ ĕçлет. Душевой пур. Апатланма столовăй та хăтлă. Кунти поварсем чăх-чĕп фабрикинче туса илнĕ продукцирен ĕçлекенсем валли тĕрлĕрен апат-çимĕç хатĕрлеççĕ. Апатланма хаклă мар. Магазин та пур.

Фабрика коллективĕ çăмарта пухса илессипе тата аш-какай хатĕрлессипе çултан-çул ăнăçлă ĕçлет. Çакна çирĕплетсе пама хăш-пĕр кăтартусене кăна илсе кăтартам-ха. Акă, сăмахран, кăçалхи январь-сентябрь уйăхĕсенче пĕтĕмпе 35 миллион та 332 пин çăмарта (пĕлтĕр çав вăхăтра 33 миллион та 320 пин) илнĕ.

Иртнĕ çулхи тăхăр уйăхра кашни чăх пуçне 211,7 çăмарта илнĕ пулсан, кăçал вара – 212,3.

Кунта çăмартасăр пуçне тата аш-какай хатĕрлеççĕ, çĕмĕрлĕнĕ çăмартасене типĕтсе çăнăх авăртса кăлараççĕ. Çăмарта хуппине те сая ямаççĕ. Фабрика каяшсăр технологипе ĕçлет. Кăçалхи январь-сентябрь уйăхĕсенче пĕтĕмпе 98 тонна аш-какай реализациленĕ (пĕлтĕрхи çав вăхăтра – 83 тонна).

Тунă ӳсĕмсемпе лăпланса лармаççĕ кунта тăрăшакансем. Коллектив пасар тата конкуренци условийĕсенче производствăна малалла аталантарас тĕллевпе чăх-чĕп отраслĕнчен татах та ытларах тупăш туса илме вăй хурать. Ку тĕлĕшпе çĕнĕлĕхсене ĕçе кĕртсе пырать, производство участокĕсене реконструкцилес енĕпе тимлет, укçа-тенкĕ хывать. Паллах, тăрăшнине кура – ĕçĕн эффективлăхĕ те.

Сăмах май акă иртнĕ çул 5-мĕш цехра Германирен чăх-чĕп усрамалли "БИГ–ДОГМАН" çĕнĕ оборудовани кӳрсе килсе вырнаçтарнă. Çакăнпа чăх-чĕп пăхакансем кăмăллă.

– Производствăна интенсификаци çулĕ çине тăратни çав цехранах çăмарта илессине 3 хут ӳстерме май пачĕ, – тет чăх-чĕп фабрикин директорĕн çумĕ, тĕп зоотехникĕ Олег Макаров, маларах асăннă цехри оборудованисене çĕнетсе улăштарнă пирки сăмах хускатнă май.

Çĕнĕлĕхсене ĕçе кĕртнин эффективлăхне кура, халĕ 4-мĕш цехра Испанире хатĕрленĕ чăх-чĕп тытмалли "АРО-АС" оборудовани вырнаçтарассипе хĕрӳ ĕç пырать. Ăна çитес уйăхра – ноябрьте ĕçе кĕртес тĕллевпе вăй хураççĕ кунта.

Çĕнĕ оборудовани хута яни вара çак цехрах 36 пин чăх вырăнне 52 пин чăх усрама, çапла майпа татах та çулталăкне хушма 5 миллион çăмарта илме май парĕ.

Паллах, ĕçри ăнăçлăха кадрсем татса параççĕ. Кунта опытлă, хăйсен ĕçне тĕплĕ пĕлекен, производствăшăн чунтан тăрăшакансем сахал мар. Пĕрне мухтаса теприне хурлама çук. Пĕчĕк корреспонденцире вĕсене кашнинех ятран асăнса хăварма та çук. Каçару ыйтатăп çавăншăн маларах вĕсенчен. Чăх-чĕпписене çитĕнтерекен Елена Храмова, Альбина Столярова, Любовь Чернова, Юрий Клюшков, Валерий Николаев чăх-чĕп цехĕнче чылай çулсем ырми-канми тăрăшакансем, Зинаида Бычкова ветеринари санитарки, производство врачĕ Светлана Столярова, Герман Матвеев инженер, Андрей Соломин диспетчер-снабженец, Владимир Кузнецовпа Юрий Семенов, Николай Бакинпа Алексей Угаров механизаторсем, çăмарта сортлакан цехри Альбина Пудова, Зоя Кузьмина, Галина Константинова, Галина Николаева, Рената Гаврилова, Регина Ершова, Зинаида Любимова тата ыттисем те.

Муркашри чăх-чĕп фабрики хăй туса илнĕ продукцие республикăн тĕп хулинче Шупашкарта, ытти регионсенче те реализацилет. Шупашкарта çав тĕллевпе темиçе киоск та уçнă. Хула çыннисем кунтан илсе пынă çăмартапа аш-какай продукчĕсене хапăл тусах туянаççĕ. Вĕсене Николай Кондратьевпа Леонид Карандаев, Григорий Столяровпа Эдуард Бычков водительсем хулари киосксене вăхăтра çитерме рейса тухаççĕ.

Мускавра та кунта туса илнĕ продукципе кăмăллă. Евгений Иванов водитель тухса çӳрет унта.

Чăх-чĕп валли тĕрлĕрен апат кирлĕ. Тĕрлĕрен рагионсенчен ăна вара Владимир Жигалевпа Андрей Тяпкин водительсем турттараççĕ, яланах рейсра. Тепĕр вырсарни кун – водительсен уявĕ. Çав ятпа вĕсене ырлăх-сывлăх, яланах такăр çул сунатăп.

Чăх-чĕп фабрики паха продукци реализацилесе сахал мар тупăш илет. Ку вара патшалăх умĕнчи парăмсене – налуксене вăхăтра татма, çĕнĕ объектсене ĕçе кĕртме, ĕç укçине кая юлмасăр тӳлеме май парать. Ĕç укçине вара кашни уйăхрах тӳлеççĕ. Уйăхсеренхи вăтам ĕç укçи 7150 тенкĕпе танлашать. Ăна продукци мĕн чухлĕ туса илнине шута илсе тӳлеççĕ. Çакă вара татах та тăрăшарах ĕçлеме хистет.

Çапла мал ĕмĕтпе пурăнать, малаллахталпăнать "Моргаушская" чăх-чĕп фабрики" патшалăх унитарлă предприятийĕн коолективĕ. Кăçал пĕтĕмпе 44 миллион та 500 пин çăмарта, 203 тонна аш-какай туса илмелле. Çав тĕллевпе вăй хураççĕ кунта.

Тăрăшсан, кашниех пĕр тĕллевпе тар кăларса ĕçленипе производствăна ăнăçлă аталантарма пулать. Çакна вара чăх-чĕп фабрикин ĕçĕ-хĕлĕ тепĕр хут çирĕплетсе парать. Ку коллективран вĕренмелли, ĕçе кĕртмелли çук мар тесшĕн эпĕ хамăн материала вĕçленĕ май.

Александр ШАРИКОВ,
Раççей журналисчĕсен Союзĕн членĕ.

Ыран – Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ

Кашни ял патнех - асфальт çул

Çитес вырсарни кун çул-йĕр хуçалăхĕн ĕçченĕсем хăйсен професси уявне паллă тăваççĕ. Çак ĕçченсен тăрăшулăхĕнчен вара пурнăçра нумай килет, çав шутран пирĕн кăмăл мĕнле пуласси те, çитес çĕре часрах çитесси те. Такăр асфальт çулпа яла кĕресси - пирĕн районти нумай ялта пурăнакансен ĕмĕчĕ пулнă пулсан, халĕ вара ку – пяанхи пурнăç улшăнăвĕ. Юлашки 2 çул хушшинче ку енĕпе лару-тăру уйрăмах лайăх енне хăвăрт улшăнать. ЧР Президенчĕн Чăваш Республикинче автомобиль çулĕсене туса пĕтерессине хăвăртлатмалли мерăсем çинчен калакан указĕ çапла майпа ял пурнăçне тепĕр уçă варкăш илсе кĕчĕ.

Районти çул-йĕр ĕçченĕсем хăйсен професси уявне мĕнле кăтартусемпе кĕтсе илни çинчен пулĕ паян сăмахăмăр. Çул-йĕр строительствин ĕçĕсем районта мĕнле пыни çинчен район пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г. НИКИТИН каласа парать:

– Çул-йĕр тăвас, пуррисене юсаса тытса тăрасси яланах район администрацийĕн чи малтан татса памалли задачисенчен пĕри пулнă. Чăваш Республикин Президенчĕн Н. В. Федоровăн çӳлерех асăннă указĕ вара çул тăвассине палăрмаллах хăвăртлатрĕ. Унпа килĕшӳллĕн кăçалпа çитес çул пирĕн районти 34 çул патне асфальт çул сарма палăртнă.

– Владимир Германович, паян çул-йĕр ăстисем асăннă указа мĕнле пурнăçлаççĕ?

– Кăçалхи 9 уйăхра тепĕр 8 ял патне 9,76 километр тăршшĕ асфальт çул туса пĕтернĕ. Çав шутран Пиккикасси, Платкасси, Пушкар, Мăрсак, Опрыскъяль, Ойкас, Чуманкасси, Ситуккасси ялĕсем патне çити. Çавăн пекех ытти объектсенче те ку ĕç малалла пырать. Кăçал вара пĕтĕмпе пирĕн 24 ял патне çити пурĕ 26 километр тăршшĕ çул тумалла. Çакна валли пĕтĕмпе 200 миллион тенкĕ укçа-тенкĕ кирлĕ.

– Çакнашкал пысăк суммăна ăçтан тупатăр?

– Çул тăвас ĕçре республика бюджетĕнчи укçа-тенкĕпе, çавăн пекех бюджет, пĕтĕм тĕнчери финанс организацийĕсен кредичĕпе, ытти кредитсемпе усă куратпăр.

– Шутласассăн, çулталăк вĕçĕччен вăхăт нумай та юлман пек туйăнать. Тата мĕнле ялсем патне çул туса ĕлкĕрмелле пулать?

– Хăш уйăхра ăçти çула туса пĕтерсе хута ярассине малтанах палăртса хунă. Тĕслĕхрен, октябрьте 2,9 километр, ноябрьте 6,15 километр, декабрьте 7,6 километр тăршшĕ çĕнĕ çул тумалла. Кăçал вара тата Шупуç, Раккаш, Эхветкасси, Вăрмой, Анаткасси, Турхан, Елача, Вускасси, Çеçмер, Мăн Тутаркас, Кăмăркасси, Уйкас Хачăк, Çĕньял Очăкасси, Канаш выççăлкки, Чăршă, Хопкĕпер ялĕсем патне çул тумалла. Хальхи вăхăтра вĕсенчен 8-шĕн патĕнче ĕçсем пыраççĕ. Äçта çул хăпартса тикĕслеççĕ, äçта хăйăрпа вак чул кӳрсе килнĕ тата ытти те. Пĕтĕмпе вара районта çул тăвас, юсас, тытса тăрас ĕçре 9 подряд организацийĕ ĕçлет. Ума лартнă тĕллеве пурнăçлатпăрах.

– Владимир Германович, пĕчĕккĕн пулин те, май килнĕ пек ялсем хушшине те асфальт çул сарма тăрăшаççĕ районта.

– Кăçал ялсенче пĕтĕмпе 1, 885 километр тăршшĕ çул тунă. Çакна валли район тата ял тăрăхĕсен бюджетĕнчен 14113 пин тенкĕ ытларах укçа уйăрнă.

– Чăннипех те, çул тунипе çеç ĕç вĕçленмест-ха. Вăл вăрăм ĕмĕрлĕ пуласси те хамăртанах килет. Ку тĕлĕшпе кăçал мĕнле ĕçсем туса ирттернĕ çулйĕр ăстисем?

– Çак ĕçе кашни çул çинчех пурнăçлатпăр. 9 уйăхра кăçал федераллă çулсене 10 километр, республика шайĕнчи çулсене 4,5 километр , муниципаллă çулсене 7 километр юсанă.

– Кирек епле уяв умĕн те пултаруллисене ятранах асăнни вырăнлă. Камсем паян ырă сăмаха тивĕç?

– Манăн уйрăмах "Волгодорстрой" акционерсен уçă обществине (генеральнăй директорĕ К.К. Жарков), "Дорстрой" чикĕллĕ яваплăхлă обществăна (директорĕ В. А. Румянцев), Чăваш Республикинчи "Чувашавтодор" патшалăх унитарлă предприятине (генеральнăй директорĕ В. М. Осипов) палăртса хăварас килет. Сăмаха вĕçленĕ май пур çул-йĕр ĕçченĕсене те уяв ячĕпе саламласа малашне паянхинчен те тăрăшарах ĕçлеме ырлăх-сывлăх сунас килет.

– Тавах, Владимир Германович, каласушăн.

Л. ПАВЛОВА
каласнă.

Ĕç коллективĕсенче

Çамрăк ветеринар

Алина Николаевна Николаева Уйкас Янасалти ветеринари участокне ертсе пыма пуçланăранпа иккĕмĕш уйăх кăна-ха. Анчах вăл хăй суйласа илнĕ ĕçне чунĕпе парăнни пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ. "Ялта ӳснĕ ытти нумай ачанни пекех выльăхсене юратасси ачаранах пуçланчĕ. Анчах манăн тĕслĕхре вăл кăшт урăхларах пулчĕ пулас. Манăн юрату профессие çаврăнчĕ. Эпĕ паян ветеринар",– тет пурнăç çулĕ çине тин кăна тăнă хĕр. Кунта "Районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци" патшалăх учрежденийĕн администрацийĕ пирки те ырăпа асăнмалла.

– Кадрсем çĕнетсе пырасси, хамăр коллективра çамрăксене ĕçе вĕрентсе çул парасси çине эпир тĕллевлĕ пăхатпăр. Тăрăшулăхăн çимĕçĕ те паян куç умĕнче, – тет хăйсен тытăмне çамрăксем ĕçлеме килнине палăртса районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин тĕп врачĕ Н. Яковлев. Ыранхи кунпа пурăнакан ертӳçĕ теес килет манăн ăна. Районти ветеринари тытăмне çамрăклатса вĕсен пĕлĕвне пурнăç ыйтнă шайра хăварас тĕллевпе ĕçлени юлашки çулсенче районта çамрăк ветеринарсене пĕрне çеç мар пурнăç çулĕ пачĕ. Икĕ çул района практикăна килсе шанчăк çуратнă Алина та çак сыпăкри пĕр кăшăл.

– Хам суйланă ĕçĕн виçине вĕреннĕ чухнех пĕлнĕ та-ха, анчах производствăра вăл татах та кăткăсрах иккен. Тивĕçлĕ пĕлӳ илни тата пуян опытлă аслă ĕçтешсем пулăшса пыни вĕсене çăмăллăнах çĕнме май параççĕ. Пĕрлехи вăйпа эпир хамăр тăрăхри 7 ялта халăхăнне 534 пуç мăйракаллă шултра выльăх (вăл шутра 252 ĕне), 218 сысна, 856 сурăх, 1659 пуç чăх-чĕп пăхса тăратпăр. Кун çумне Ильич яч. хис. хуçалăхри 733 пуç мăйракаллă шултра выльăха (вăл шутра 251 ĕне), 1008 пуç сыснана, 60 çемье пыл хурчĕн çемйине тата 24 пуç лашана хушсан ĕç калăпăшĕ самай сарăлса каять. Анчах пуç усмастпăр. Ял халăхĕн выльăхĕсем тĕлĕшпе 25 тĕрлĕ профилактика ĕçĕсене йăлтах туса иртертĕмĕр, халĕ хĕле кĕрес умĕнхи ĕçсене обществăлла выльăхсем патĕнче пурнăçлатпăр, – каласа пачĕ çамрăк ветеринар Алина Николаевна Николаева Ильич яч. хис. хуçалăх фермисем хĕле хатĕррине уйрăммăн палăртса.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Юбилей

Саламлатпăр

Юратнă аннене, хунямана, асанне-кукамая – Анатри Тăмлай ялĕнчи **Валентина Ивановна БЕЛОВАНА** 75 çул тултарнă ятпа саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Эпир сана юрататпăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе хĕрĕсем, кинĕсемпе мăнукĕсем.

Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă ывăлăма, мăшăрăма, аттене, асаттене, ничтене **– Николай Григорьевич ГРИГОРЬЕВА** октябрĕн 20-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр.

Эпир ăна хисеплесе юбилей ячĕпе вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, çемьере тулли телей сунатпăр. Çывăх тăванусене пулăшса пынăшăн сан вăй-хăвату ӳссе пытăр, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланччăр, мăшăрупа, ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе ĕмĕр вĕçне тухиччен килĕштерсе пурăнмалла пултăр.

Такăр пултăр сан çулу ялан,
Пирĕншĕн эс хаклă ылтăнтан.
Пурăнма вăй-хал паран ялан,
Тав сана пуриншĕн те чунтан.

Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕ, мăнукĕсем, ывăлĕпе кинĕ, Григорьевсен, Афанасьевсен, Яхеевсен çемйисем тата çывăх тăванĕсем.

ЛЮБИМАЯ ГАЛЯ, МИЛАЯ МАМА!!!



Что такое счастье – трудно описать, потому хотим мы просто пожелать радости, здоровья, света и тепла, и всегда прекрасно пусть идут дела! Пусть в жизни удача всегда будет с тобою, пусть будет побольше безоблачных дней. И пусть твое сердце всегда согревают любовь и забота родных и друзей!

С днем рождения поздравляют муж Василий, дети Саша и Мария!

Муркашра пурăнакан **Галина Ивановна ЗУЗАНА** 50 çулхи юбилейпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Пурнăçра вăрăм кунçул, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунса çак сăвва парнелетпĕр.

Тĕлĕнтермĕш кун – çуралнă кун,
Тунти кун е ытлари кун,
Пурпĕрех асра юлать çак кун.
Çут тĕнчене килнĕ çамрăк чун:
Е хĕлле çуралнă эсĕ, е çулла,
Çуркунне е ылтăн кĕркунне –
Çирĕп ут эс пурнăç çулĕпе,
Ăлра тыт Тур панă телейне.

Саламлаканĕсем: кӳршисем, Смирновсен, Ершовсен, Захаровсен çемйисем.

Хаклăран та хаклă çыннăмăра – тăхлачăна, хунямана, асаннене – Купăрля ялĕнче пурăнакан **Раиса Ивановна СТЕПАНОВАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эпир сана лайăх ăнланатпăр. Пурнăçу çăмăл килмерĕ пулин те, эсĕ кирек епле ĕçрен те хăраса тăмарăн, ĕмĕр тăршшĕпех тăван хуçалăхра ырми-канми вăй хутăн. Сана малашне те тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хăват, нумай çул тăванусене савăнтарса пурăнма çирĕп сывлăх, тумхахсăр кун-çул, тулли телей сунатпăр.



Санăн ырă, вашават кăмăлу, ăнланулăху пире пурăнма çунат хушаççĕ. Эпир сана юрататпăр, хисеплесе çĕре çити пуç таятпăр.

Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран.
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма ялан вăй-хал парать.

Çак уйăхрах çамрăк хăтан Леонид Степановăн та çуралнă кунĕ. Ăна та çав ятпа ăшшăн саламлатпăр, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр.

Саламлаканĕсем: хăтипе тăхлачи, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.